**Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнĕ май**

# Çав кунсен çухалмĕ чапĕ

***Пысăк юбилей – Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитсе килет. Пирĕн çĕршывра кăна мар, ытти çĕршывсенче те ăна чаплăн паллă тума хатĕрленеççĕ. Çавна май район шайĕнче те Аслă Çĕнтерĕве халалласа тĕрлĕ мероприятисем сахал мар ирттерме палăртнă. Акă район администрацийĕн пуçлăхĕн кăçалхи ноябрĕн 12-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе 2009 çулхи ноябрь уйăхĕнчен тытăнса 2010 çулхи май уйăхĕччен районта Аслă Çĕнтерӳ уявне халалласа халăх пултарулăхĕн фестивальне ирттерме палăртнă. Район хаçачĕн сотрудникĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕпе Алевтина Евстафьевна АНДРЕЕВАПА тĕл пулнă май асăннă фестиваль пирки тĕплĕнрех каласа пама ыйтнă.***

**– Алевтина Евстафьевна, фестиваль тĕллевĕсем, вăл мĕнле тапхăрсемпе иртесси пирки пĕлес килет.**

– Тĕллевĕсем пирки калас пулсан, вĕсем паянхи куншăн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Хамăр ума эпир чи малтанах районта халăх пултарулăхне аталантарассине, ăна аталантарма майсем туса парассине тĕп вырăна лартатпăр. Çынсене тĕрлĕрен пултарулăх ĕçне хутшăнма майсем туса пани пысăк пĕлтерĕшлĕ тесе шутлатпăр. Художество мелĕсемпе Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунин пĕлтерĕшне туллин уçса пани, салтакăн вăрçăри паттăрлăхне кăтартни пĕлтерĕшлĕ самант пулса тăрать. Кунпа пĕрлех коллективсен пултарулăх шайĕ те ӳсет. Коллективсене ертсе пыракансен опытне сарассине, культурăпа искусство тĕлĕшĕнчи пултаруллă ĕçченсен ĕçне кăтартассине те малти вырăна хуратпăр. Кунпа пĕрлех çакă вăл çитĕнекен ăрăва хамăрăн историе хисеплеме, Тăван çĕршыва юратма вĕрентĕ, ăс-хакăл, художество, эстетика воспитанийĕ парас тĕлĕшпе те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулĕ.

Фестивале виçĕ тапхăра уйăрнă. Пĕрремĕш тапхăр кашни ял тăрăхĕнче 2009 çулхи норябрĕн15-мĕшĕнчен тытăнса ноябрĕн 30-мĕшĕччен пырать. Вырăнти ял тăрăхĕсенчи жюри членĕсем халăх пултарулăхĕн иккĕмĕш зона тапхăрне хутшăнма тивĕçлисене палăртаççĕ.

Иккĕмĕш тапхăр 2009 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса декабрĕн 30-мĕшĕччен зонăсенче пырать. Ун валли ятарлă график туса хатĕрленĕ. Фестивалĕн иккĕмĕш тапхăрне хăйсен пултарулăхне тĕрлĕ жанрсенче кăтартакансем хутшăнаççĕ: ташăпа юрă ансамблĕсем, драма, фольклор, вокалпа инструментсен, хор коллективĕсем, тĕрлĕрен сăнарлă, декоративлă-прикладной пултарулăхпа çыхăннисем.

Виççĕмĕш тапхăр вара 2010 çулхи январь – май уйăхĕсенче иртет. Ун чухне гала-концертсем, пултарулăх ĕçченĕсен выставкисене йĕркелеççĕ, коллективсем Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халалласа республикăра ирттерекен конкурссемпе фестивальсене хутшăнаççĕ.

**– Пултарулăх ушкăнĕсемпе уйрăм участниксен ăсталăх шайне хак панă чухне мĕн çине тимлĕх ытларах уйăрма пăхнă-ха?**

– Чи малтанах актуаллăха малти вырăна хумалла. Программăсем конкурсăн тĕллевĕсемпе тата задачисемпе çыхăнса тăмалла. Репертуара суйласа илни, çĕнĕлĕх шайĕ, режиссер тата актер пултарулăхĕ, участниксен пултарулăх шайĕ, номерсен композицийĕпе вĕсене лартса парассин хăйне евĕрлĕхĕ, коллективсен художество тата професси шайĕ мĕнле пулни тĕп вырăнта пулаççĕ. Кунпа пĕрлех сцена çинчи культура шайне, костюмсем жанрпа тата тематикăпа çыхăннине те шута илеççĕ.

**– Фестиваль-конкурсăн итогĕсене пĕтĕмлетесси, çĕнтерӳçĕсене наградăласси пирки те пĕлес килет.**

– Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халалласа ирттерекен халăх пултарулăхĕн фестивалĕнче мала тухнисене уйрăм номинацисемпе палăртма пăхнă. Вĕсен ушкăнĕсенче çаксем:

– юрăпа ташă ансамблĕсем;

– фольклор коллективĕсем;

– хор коллективĕсем;

– драма коллективĕсем;

– вокалпа инструментсен ансамблĕсем;

– халăх промыслисен тата декоративлă прикладной искусство маçтăрĕсем;

– сăн ӳкерме юратакансем (фотолюбители);

– ӳкерме юратакансем.

**– Çĕнтерӳçĕсене палăртасси мĕнле пулĕ?**

– Малти вырăнсене йышăннă коллективсемпе уйрăм участниксене дипломсем тата парнесем параççĕ. Ял тăрăхĕсен администрацийĕсем халăх пултарулăхĕн фестивалĕн коллективĕсемпе участникĕсем валли ятарлă призсем хатĕрлеме пултараççĕ.

Юлашкинчен çавна каласа хăварасшăн. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ туни вăл – пысăк событи. Ăна эпир пурте чыслăн паллă тума тивĕç. Çак мероприятирен никам та айккинче юлмĕ тесе шутлатăп.

Çавна уйрăммăн палăртса хăварнă пулăттăм. Фестивале хатĕрленсе ирттернĕ май унпа çыхăннă мероприятисене Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсене, инваличĕсене, ветерансене, тыл ĕçченĕсене анлăрах хутшăнтарма тăрăшмалла. Çакă вăл вĕсене чыс туни кăна мар, çавăн пекех пулас ăрăва патриотла воспитани парас тĕлĕшпе те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**

**Пирĕн интервью**

# Тивĕçлисене патшалăх пулăшать

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Асăннă саккунпа килĕшӳллĕн Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсен, инвалидноç пур «Блокадăри Ленинградра пурăнакана» паллăна илнисен çемье членĕсем, çавăн пекех çапăçусене хутшăннă ветерансемпе вĕсен çемье членĕсем 85-шер тенкĕ илсе тăраççĕ.

«Раççей Федерацийĕнчи инвалидсене социаллă хӳтлĕх парасси çинчен» саккунпа килĕшӳллĕн инвалид ачасемпе вĕсен çемье членĕсен тата инвалидсен уйăхсерен паракан çак тӳлев 325 тенкĕпе танлашрĕ.

РФ «Чернобыльти АЭС катастрофăна пула инкек тӳснĕ граждансене социаллă хӳтлĕх парасси çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн пурăнмалли хваттерпе коммуналлă пулăшусемшĕн çăмăллăх илме право пуррисен уйăхсерен паракан çак тӳлев 325 тенкĕпе, вĕсен çемье члнĕсен 85 тенкĕпе танлашать.

**– Светлана Леонидовна, кунта çемье членĕсем пирки сăмах пырать те, камсем кĕреççĕ унта? Тĕслĕхрен, инвалид-ача пур çемьере пиччĕшĕсемпе аппăшĕсем (çав шутран 18 çул тултарнисем те), çавăн пекех аслашшĕпе асламăшĕсем, çемьепе пĕрле пурăнаççĕ, пĕр хуçалăх тытаççĕ пулсан, çемье членĕсем шутланаççĕ-и?**

Ветерансемпе чернобылецсене çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн социаллă пулăшу панă чух камсем çемье членĕ пулнине çурт-йĕр законодательствипе палăртаççĕ. Çурт-йĕр кодексĕн 31 тата 69 статйисемпе килĕшӳллĕн çемье членĕсем тесе харпăрлăх хуçипе пĕрле пурăнакан мăшăрне, ашшĕпе амăшне, ачисене шутлаççĕ.

Раççей Федерацийĕн çемье çинчен калакан кодексĕпе килĕшӳллĕн инвалид ача пур çемье составне инвалид ачасем, вĕсен ашшĕ-амăшĕсемпе çул çитмен пиччĕшĕсемпе аппăшĕсем кĕреççĕ.

**– Калăпăр, инвалид ача пур çемьене вĕсен членĕсене шута илсе паракан уйăхсерен тивĕçекен тӳлев пурăнмалли пӳлĕмпе коммуналлă пулăшусемшĕн тӳлемелли суммăран иртсе каять тейĕпĕр. Кун пек чухне мĕн тумалла?**

– Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2008 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансемпе вĕсен çемье членĕсене улшăнман суммăпа тӳлеççĕ: урăхла каласан, вăл пурăнмалли хваттер лаптăкĕнчен те, çав çуртра мĕнле условисем пурринчен те, пурăнмалли хваттерпе коммуналлă пулăшусемшĕн мĕн чухлĕ тӳлениничен те килмест.

**– Пирĕн калаçу вĕçленсе пырать. Светлана Леонидовна, халĕ ноябрь уйăхĕ. Пурăнмалли хваттерпе коммуналлă пулăшусемшĕн июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса кĕртнĕ улшăнусене çак кунран пуçласа параççĕ-и? Е мĕнле те пулин хăйне евĕрлĕхсем пур?**

– Вилнĕ Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсен мăшăрĕсемпе инвалидсене уйăхсерен паракан тӳлеве июль уйăхĕнчен пуçласа çĕнĕрен шутласа панă.

Çӳлерех асăннă çăмăллăхсене тивĕçекенсем справка тăратнă уйăхран уйăхсерен тивĕçекен тӳлеве çĕнĕ калăпăшпа илме пуçлаççĕ.

Юлашкинчен çакна палăртам. Хăвăра хумхантаракан ыйтусемпе эсир районти социаллă хӳтлĕх пайне çак телефонсемпе шăнкăравласа пĕлме пултаратăр: 62-2-69, 62-2-40. Муркаша килсен пирĕн пата кĕрсе тухма май тупсан та аван пулмаллав.

**Л. ПАВЛОВА**
**калаçнă.**

**Ĕçре тăрăшуллă пулнăран**

# Пултарулăхĕшĕн тав тунă



***Федераллă казначействăн Чăваш Республикинчи управленийĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕнче пултаруллă та хастар ĕçченсем сахал мар. Вĕсенчен пĕри – Анна Юрьевна Шишкина. Кунта вăл аслă казначей пулса 2002 çултанпа вăй хурать. Пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ вара унăн 17 çул ытла. Вăл 1991 çулта Чăваш ял хуçалăх институтне вĕренсе пĕтернĕ.***

***Кунта ĕçленĕ тапхăрта вăл хăй квалификациллĕ специалист пулнине кăтартса пачĕ, пĕлӳ шайĕ те унăн пысăк тата практика хăнăхăвĕ те тивĕçлĕ шайра. Федераллă, вырăнти тата ял тăрăхĕсен бюджечĕсене касса енĕпе тивĕçтерессипе тимлет вăл, хăйĕн ĕçĕнче Раççей Федерацийĕн Бюджет кодексĕн требованийĕсене тĕпе хума тăрăшать.***

***Хальхи вăхăтра илнĕ пĕлӳ шайĕпе лăпланса ларни кăна çителĕксĕр. Пурнăç малаллах шăвать. Çавна май Анна Юрьевна хăйĕн ĕçĕнче квалификацие кирлĕ шайра тытса тăма тĕллев лартать, компетентлă, пуçаруллă.***

***А.Ю. Шишкина лайăх специалист кăна мар, обществăлла ĕçсенчен те нихăçан та айккинче тăмасть. 2008 çулхи декабрь уйăхĕнче ăна «Раççейри патшалăх учрежденийĕсен ĕçченĕсен профсоюзĕ – 90 çулта» медальпе наградăланă.***

***Халĕ вара – татах тепĕр ырă хыпар. Хăйĕн тивĕçне чунне парса пурнăçласа пынăшăн, плансемпе задачисене пахалăхлă пурнăçланăшăн тата нумай çул хушши тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн ăна Федераллă казначействăн Чăваш Республикинчи управленийĕ тав тунă.***

**Н. СКВОРЦОВА,**
**аслă казначей.**

**Çĕр ĕçченĕн çулталăкне халалласа**

# Хастар механизаторсене чысларăмăр

Республика Президенчĕ Н. Федоров 2009 çула Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ тесе палăртнăччĕ. Çакă ăнсăртран мар. Çĕр ĕçĕ вăл яланах йывăр, çав вăхăтрах вара сумлă та пархатарлă пулнă.

Çак кунсенче Москакасси шкулĕнче «Мухтав çĕр ĕçченне» ятпа хăйсен пĕтĕм кун-çулне çĕрпе çыхăнтарнă, нумай çул хушши «Передовик» хуçалăхра вăй хунă, ĕçре мухтавлă çул утса тухнă хастар механизаторсене чысласа савăнăçлă тĕл пулу иртрĕ.




Уяв чăвашсен авалхи «Алран кайми аки-сухи» юррипе пуçланчĕ. 9-мĕш класра вĕренекенсем класс ертӳçи О.И. Тарасов тăрăшнипе литмонтаж хатĕрленĕ. Шкул библиотекарĕ Г.А. Тимофеева тата ял библиотекин заведующийĕ О.Н. Столярова хатĕрленĕ «Эс – çĕр ăсти, эс – çĕр хуçи» электронлă презентацире хăйсен ĕç вăхăтĕнчи сăн ӳкерчĕксене усă курса, ĕç ветеранĕсем çамрăк вăхăтсене аса илчĕç, çĕр ĕçĕ мĕн тери чыслă пулнине, çăкăр пирĕн сĕтел çине мĕнле йывăррăн килнине палăртрĕç.

А.Т. Петровăн – республикăри паллă механизаторăн, ЧР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн ĕç стажĕ 40 çул ытла. О.Я. Столярова, В.И. Беспалова, Г.Г. Волков 17–18 çулта чухне çĕнĕ çĕрсене уçма хăйсен ирĕкĕпе тухса кайса Казахстан, Оренбург çеçен хирĕсенче ырми-канми тăрăшнă. В.Ф. Смирнов нумай çул хушши тăван «Передовик» хуçалăхра ĕçленĕ. Тивĕçлĕ канура пулин те, юратнă ĕçне пăрахма шутламасть.

Çавра сĕтел хушшинче шăкăл-шăкăл калаçса çамрăклăх юррисене аса илтĕмĕр. Юрлама вĕрентекен А.В. Макаров ертсе пыракан хор кружокĕнчи ачасем илемлĕ юрăсем юрласа пурне те савăк кăмăл парнелерĕç.

Уява вĕçленĕ май шкул директорĕ И.А. Иванов ĕç паттăрĕсене малашнехи пурнăçра ырлăх-сывлăх сунса тав сăмахĕ каларĕ, килнĕ хăнасене шкул ачисенчен пĕчĕк парне – хамăр тăрăхри çĕр ĕçченĕсене халалласа кăларнă «Эс – çĕр хуçи» брошюрăсем парнелерĕ.

**И. ПУШКИНА.**
Москакасси шкулĕ.

**Экологи ыйтăвĕ тавра**

# Тирпей-илемшĕн тăрăшасчĕ

Çĕршыври массăллă информаци хатĕрĕсенче экологи ыйтăвĕсемпе çыхăннă хыпарсем час-часах курăнма пуçларĕç. Çакă ахальтен мар. Эпир малашне те çут тĕнчене пĕр шелсĕр, шутламасăр паянхи пек вараласан, вăл та пире хăйĕн кăралăхне кăтартĕ. Ун чухне вара çĕр çинчи пур çыннăн та пуçне хыçма лекĕ.

Темиçе çул каялла экологи ыйтăвĕ ялсенче ытла çивĕчех марччĕ-ха. Паян вара урăхла лару-тăру. Ял урамĕсем, улăхсемпе вăрмансем те этем «тăршнипе» тĕрлĕ каяшпа «илемленме», тулма пуçларĕç. Çакă пур çынна та хумхантармалла пек, анчах чылайăшĕ çак ыйту çине хальлĕхе çаврăнса та пăхмасть-ха.

Çамрăксем паянхи кунпа çеç пурăнни уйрăмах пăшăрхантарать пурнăç пурăнса курнă ватă çынсене. Яшсемпе хĕрсем чылай чухне эрех-сăра кĕленчисене, пирус курупкисене ăçта пушатнă, çавăнтах пăраха-пăраха хăвараççĕ. Обществăлла вырăнсенче çăвар тулли сурчăк сурса тăни те вĕсемшĕн яланхи пулăм. Тĕслĕхне вĕсене вара аслисемех кăтартса параççĕ. Ашшĕ-амăшĕнчен пуçласа ытти «хастар» хĕрарăм-арçын таранах.

Пирĕн Муркаш районĕ йăлари хытă каяшсене пухмалли полигона вăхăтра тума тытăнчĕ тесе калас килет. Вăл хута кайсан, район çăмăллăн «сывласа» ярĕ пуль тетĕп. Вăл тавралăха, атмосферăна, юхан шывсене, ĕçмелли шыва та тĕрлĕ сиенлĕ хутăшсем лексе вараласран упрĕ. Çут çанталăка çăмăллăх кӳрĕ.

Анчах пур тасамарлăха йăлтах унта турттарса çитерме май пулмĕ, паллах. Çавăнпа та хамăрăн та вырăнта çак ыйтăва май килнĕ таран татса памалла, пурнăçламалла. Çак ĕçре ял тăрăхĕсен администрацийĕсем те, вырăнти депутатсем те хастарлăх, тĕслĕх кăтартсан аван пулмалла. Çут çанталăк ПИРĔН КИЛ пулнине пурин те асра тытасчĕ. Пирĕн пурин те пĕрле тăрăшса çут çанталăка упрасчĕ, юратасчĕ. Çитес ăрусем валли таса та тирпейлĕ «кил» хăварасчĕ. Çĕр-аннене тĕрлĕ тасамарлăхсемпе хупласа хамăра хамăр пĕтеретпĕр вĕт!

Çӳлерех асăннă çитменлĕхсемпе атьăр-ха пĕр пулса кĕрешер. «Пĕччен суран – типсе пырать, халăх сурать – кӳлĕ пулать», – тенĕ каларăша ăша хывса тимлесчĕ пурин те. Тирпей-илемшĕн тăрăшасчĕ.

**Çак сĕнӳпе килĕшме чĕнсе Игорь МАЙКОВ.**
Кашмаш ялĕ.